А 24/35 4У3 15/492

# ЖИТІЕ

# СВЯТАГО ГЕРМАНА,

## Свіяжскаго Чудотворца

## ВТОРАГО АРХІЕПИСКОПА КАЗАНСКАГО

## НА ЧУВАШСКОМЪ ЯЗЫКѢ.

Изданіе Православнаго Миссіонерскаго Общества.

1308-
Библіотека М.П.М.

СИМБИРСКЪ.
Типо-литографія А. Т. Токарева.
1896.

Отъ Совѣта Братства Св. Гурія печатать разрѣшается. Января 4 дня 1894 года.

Предсѣдатель Совѣта Братства *АНАСТАСІЙ*, *Епископъ Чебоксарскій.*

## ХУСАНТИ ИККĔМĔШ АРХІЕПИСКОП СВЯТОЙ ГЕРМАН ПУРĂНĂÇĔ.

Святой Герман пурăнăçĕ çинҫен ҫипертерех ăнланмашкăн, малтан Хусанпа Сĕве хули çинҫен, тата вăл таврара ĕлĕк пурăннă тĕне кĕмен халăхсем çинҫен пăртакçă та пулин пĕлес пулаť.

Хусанпа Сĕве хули пек Турă тивлеҫĕпе ҫапа тухнă хула сахал. Хусанта та, Сĕве хулинҫе те Туррăн хăватлă ĕçĕсем ĕлĕк те нумай пулнă, халĕ те нумай пулаççĕ. Хусанĕнҫе Турăшăн ĕçлесе ĕмĕрĕсене ирттерсе, вилсен святойа тухнă архіерейсен Гуріййпа Варсонофіййĕн ÿҫĕсем халĕ те пĕр çĕрмесĕр выртаççĕ; унтах тата Турă Амăшин тĕлĕнмелле тупăннă сăнĕ пур. Ăна вырăсла: „Икона Казанской Божіей Матери“ теççĕ. Çав çĕрмесĕр выртакан святойсенĕн ÿҫĕсене, Хусанта тупăннă Турă Амăшин сăнне пуççапма тĕрлĕ йенҫен темĕн ҫухлĕ халăх пыраť. Унта пыракансем, хăйсем Турă хăватне ĕненнине кура, нумайĕшĕ ҫирĕсенҫен те ҫĕрĕлеççĕ, хуйхисене те пусараççĕ, пур тĕрлĕ асапĕсенҫен те хăтăлаççĕ.

Сĕве хулинҫе те çавăн пек Турă хăваҫĕпе ҫапа тухнă ĕççем пур. Унта икĕ монастырь: пĕри арçын монастырĕ, тепĕри хĕр-арăм монастырĕ. Арçын монастырĕнҫе Святой Германăн ÿҫĕ çĕрмесĕр выртаť.

Хусан таврашĕнҫе ĕлĕк тутар патшалăхĕ пулнă; вĕсен патши Хусанта пурăннă, çавăнпа Ху-

сан вăл ĕлĕкех аслă хула пулнă. Вăл хулара вырăссем те пулнă, анҫах вĕсем унта хăйсем ирĕккĕн пурăнман, тутарсем аллинҫе тыткăнра пурăннă. Вăл патшалăхра тата урăх халăхсем те пулнă: ҫăвашсем, ҫармăссем, мăкшăсем, арсем; вĕсене те тутарсем ирĕксĕр хăйсене пăхăнтарса усранă. Тутар патши аллинҫе пурăнасси вĕсене пит хĕн пулнă. Унти халăхсем вырăссенҫен пуҫне пĕри те ҫăн тĕне кĕнĕ ҫынсем пулман: вĕсем ҫăн Турă ҫинҫен нимĕн те илтмен, нимĕн те пĕлмен, пур те, халҫхи тĕне кĕмен ҫăвашсем пек, суйа тĕнпе пурăннă. Пĕр шухăшласан, халҫхи тĕне кĕмен ҫăвашсем ҫапах вĕсенҫен самайтарах пурăнаҫҫĕ; халҫхи тĕне кĕмен ҫăвашсем тĕне кĕнисем хушшинҫе пурăнса, ыррине вĕренсе пыраҫҫĕ, усаллине хăйсем те сисеҫҫĕ; Христос тĕнĕ ытти тĕнсенҫен ыррине ăнласа илсе, вĕсем пĕҫĕккĕн, пĕҫĕккĕн ҫăн тĕне кĕрсе ҫиркĕве ҫӳре пуҫлаҫҫĕ.

Хусан тутарĕсен патшалăхне Вырăс Патши Иван Васильевичъ Грозный 1552-мĕш ҫулта ҫĕнтернĕ те, ăна Вырăс Патшалăхĕ ҫумне хутăштарнă.

Хусан патшалăхне хăй аллине илсен, Вырăс Патши унти халăхсем ҫăн Турă ҫинҫен пĕртте пĕлменшĕн пит пăшăрханнă. Патшапа ун ҫухнехи митрополит Макарій Хусана архіепископ лартмалла тунă. Унҫҫен, малта каланă пек, Хусан патшалăхĕнҫе тыткăнра пурăнакан вырăссем анҫах тĕне кĕнĕ ҫынсем пулнă, ытти халăхсем: тутарсем, ҫăвашсем, ҫармăссем, мăкшăсем, арсем, пур те суйа тĕнлĕ ҫынсем пулнă; суйа тĕнĕ те вĕсен пурин те пĕр пек пулман. Ҫав тĕрлĕ йышлă, пур те

харпăр хăй тĕнĕпе пурăнакан халăхсене Христос ҫинҫен вĕрентсе тĕне кӳртесси пит йывăр ĕҫ пулнă.

Вăл вăхăтра Селижар хулинҫи монастырте монахсен пуҫлăхĕ игумен пĕр Гурій йатлă паллă ҫын пулнă. Гурій вăл пĕр Турăшăн анҫах ĕҫлесе пурăнакан ҫын пулнă. Турă ҫинҫен халăха пит тăрăшса вĕрентнĕ, калаҫма ăста ҫын пулнă. Патшапа митрополит, Хусана архіепископа кама лартассине Турă Хăй кăтарттăр тесе, ҫиркӳре шăпа йартарнă та, шăпа ҫав Гурійе тухнă. Гурій вара ҫапла Хусанăн ҫи малтанхи архіепископĕ пулнă; ăна пулăшса пурăнма Хусана тата архимандритсем те йанă. Унта йанă архимандритсенҫен Германпа Варсонофій кайран пит ҫапа тухнă. Турă ҫинҫен пĕр шухăш тытса Герман ҫамрăклах Гурійпа пĕрлешнĕ; вĕсем кайран Хусанта пурăннă ҫух та мĕн вилиҫҫенех икĕш тус пурăннă.

Святой Германăн тĕпĕ-йăхĕ Твер кĕпĕрнинҫе Старица хулинҫе пулнă. Монаха кĕриҫҫен вăл Григорій йатлă пулнă; вăл Садыревыхъ-Полевыхъ тийекен ҫаплă улпутсен ăрăвĕнҫен ҫуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ ырă кăмăллă, сăваплă ҫынсем пулнă, вĕсем ывăлне те пĕҫĕкҫĕренех хăйсем пек ырă пурăнма вĕрентнĕ; Григорій тата хăй те пит йăваш, йĕркелĕ аҫа пулнă: вăл ашшĕ-амăшĕ сăмахĕнҫен пĕрре те тухман, вĕсем вĕрентнĕ пек пурăнма тăрăшнă; аҫа-пăҫасемпе выљама йуратман, йаланах ҫиркĕве ҫӳреме йуратнă. Григорій вăл пĕр ывăл анҫах пулнă. Ашшĕ-амăшĕ вăл ҫапла кăмăллине кура, ăна пур ĕҫрен малтан кĕлĕсем вĕрентнĕ, Псалтир вулама, ытти Турă кĕнекисене те вулама

вĕрентнĕ. Григорій çапла çуллен-çул ăслăланса, йĕркене кĕрсе пынă. Пысăклансан вăл Турă кĕнекисене тата хытăрах ăнласа вуланă, ҫиркĕве пур кĕлĕсене те çÿренĕ; тата ҫас ҫасах вăл пĕр пĕҫҫен çĕре кайа кайа кĕл-тунă. Ĕçес çийес тĕлĕшĕнҫен те вăл хăйне хăй пит хытă тытнă: хăш ҫухне халĕнҫен кайиҫҫенех çимесĕр пуранна. Ашшĕамăшĕ Григорій çапла типĕ пит хытă тытса ҫире кайасран хăраса ăна хĕрхенсе, çăмăлтарах тыттарасшăн пулнă. Хăйсем вилсен мĕн-пур пурлăхĕ вĕсен Григорійе анҫах йулмалла пулнă, çавăнпа Григорійне вĕсем кил-çурт тытса пурăнма та вĕрентесшĕн пулнă. Анҫах Григорій ку çĕрте канлĕ, пуйан пурăнас тесе шухăшламан; унăн шухăшĕ те, сăмахĕ те, ĕçĕ те Турă çинҫе анҫах пулнă; çĕр çинҫи шанҫăксăр ырăлăха, канлĕ пурăнăçа ĕмĕтленсе пурăнман вăл, йалан леш тĕнҫери ĕмĕрлĕх пурăнăçшăн йĕнĕ, унти пурăнăçшăн анҫах мĕн халĕ çитнĕ таран тăрăшнă вăл.

1530-мĕш çул таврашĕнҫе Григорій 25 çула çитнĕ. Çав 25 çулхи çын, Григорій, хăйне пулас мула пĕтĕмпех ашшĕсене парса хăварнă та, хăй Москва кĕпĕрнĕнҫи Волоколамскри Іосиф монастырне кĕнĕ. Унта вăл ахаљ çын пек нумай та пурăнман, ҫас монаха кĕнĕ. Монаха кĕнĕ ҫух çынна ĕлĕкхи йатне улăштарса урăх йат параççĕ, çавăнпа вăл та Григорій вырăнне Герман йатлă монах пулнă.

Çав Іосиф монастырĕнҫе пурăнăç йĕрки пит хытă пулнă; унти монахсем Турăшăн анҫах асапланса, йывăра тÿссе пурăнма вĕренсе пынă.

Ун ҫухне ҫав монастыртех преподобный Гурій те монахра пурӑннӑ. Вӑл Гурій монах хӑйне хӑй пӗртте хӗрхенмен, Турӑшӑн пит хытӑ тӑрӑшса, асапланса пурӑннӑ; кайран ӑна ҫав монастырти монахсен пуҫлӑхне, игумена кӳртнӗ. Волоколамскри ҫав монастырь пуҫлӑхӗ преподобный Гурій Герман кӑмӑлне пит кайнӑ; вӑл ҫавӑн пек ҫынсемпе пурӑнасшӑн ӗлӗкех ҫунса тӑнӑ; вӑл йалан: „Турӑшӑн тӑрӑшса пурӑнакан ҫынсемпе пӗрле пурӑнса, йепле те пулсан ытларах Турра йурӑхлӑ пурӑнма вӗренес-ҫӗ, тесе ӗмӗтленнӗ. Монаха кӗрсен Герман хӑйне хӑй кӗҫӗне хурса, хӑйне йалан пуринҫен кайа тытса пурӑннӑ; хӑйне мӗн хушнине вӑл пурне те пӗр ӳркенмесӗр, лайӑх, тӗплӗ туса тӑнӑ. Герман, хӑй ҫырӑва ӑстаскер, темӗн ҫухлӗ ҫиркӳ кӗнекисем ҫыра ҫыра илнӗ. Ҫиркӗве кӗлле ҫи малтан пынӑ, тухасса пуринҫен кайран тухса кайнӑ. Преподобный Гурійрен куракан ырӑ ӗҫсене вӑл йалан сӑнаса хӑй ӑшӗнҫе тытса пурӑннӑ, хӑй те пӗтӗм халӗнҫен Гурій пекех пурӑнма тӑрӑшнӑ. Вӗсем икӗшӗ 20 ҫул ҫапла пӗрле пурӑннӑ. Германӑн вара кӑмӑлӗ те пӗтӗмпех Гурійӗннӗ пек пулса ҫитнӗ: вӗсем пӗрне пӗри пит йуратнӑ, пит тус пурӑннӑ. Кайран вӗсем каллах пӗрне пӗри пулӑшса, Хусан тавращӗнҫи ҫӑн Турӑ ҫинҫен пӗртте пӗлмен, тӗттӗм халӑхсем хушшинҫе Христос ҫинҫен вӗрентсе пурӑннӑ. Икӗш те ҫапла пӗр ӗҫе тытӑнса Христос тӗнне сарма тивӗҫлӗ пулнӑшӑн, вӗсем пӗр пӗринпе пит савӑннӑ.

1550-мӗш ҫулсенҫе ҫав пит йӑваш пурӑнакан Германа Твер кӗпӗрнинҫи Старица хулине, хӑй

çуралнă çĕрех, Турă Амăшĕ вилнĕ кун йаҫĕпе лартнă монастыре ҫĕннĕ; унта ăна монахсен пуçлăхне игумена кӳртес тенĕ. Герман хăйне ҫĕнме пынă çынсене каланă: ей ырă çынсем! епĕ хам та наҫар, Турра йурăхлă ырă ĕçсем тума пултарас çук çын, йепле епĕ вăл монастыре пăхса тăма хам çийе илем? унти монах тăванăмсене çăлăнасси çинҫен вĕрентме ăçтан пултарам епĕ? Шыв çинҫи карапа та ким тытса курман, шывпа çӳресе пиçмен çын аллине шанса памаççĕ; епĕ пур йенҫен те çук çын, вăйсăр çын, çав Христос карапне хам çийе илсе, Христос Хăй йунĕпе тасатнă çынсене çăлăнмалли çинҫен йепле вĕрентме пултарам? тенĕ. Ҫĕнме пынă çынсем ăна уйрăла пĕлмесĕр тархасланă. Германăн вара ирĕксĕрех итлес пулнă. Ăна Твер хулинҫи архіерей Акакій пиллесе Старицари монастыре архимандрита кӳртнĕ. Çав Акакійĕн малашне мĕн пулассине каласа памалăх хăват пулнă. Вăл халĕ Хусанта çĕрмен ӳҫĕпе тĕлĕнмелле хăватсем кăтартакан Варсонофійе те Твер хулинҫе архіерей пулса пурăнассине малтанах каласа кăтартнă, тата Герман та Турă тĕлĕшĕнҫен ҫапа тухассине пĕлнĕ.

Герман çав хăй çуралнă Старица хулинҫе пурăннине асăнмалăх ĕçсем нумай туса хăварнă: вăл монастырти ҫиркӳсене пурне те илем кӳртнĕ; пуринҫен ытла вăл Турă умĕнҫе ҫиркӳре тăвакан кĕлĕсене йалан Турăран хăраса, ырă шухăшпа, пит ҫаплă туса тăнă, монахсене те хăй монастырте пурăнма вĕреннĕ йĕркенех вĕрентнĕ.

Старицари монастырте пурăннă ҫух святой Герман хăй вырăнне кӳртсе хăвармалли çын Іов йатлă

монаха хатёрлесе пурăннă. (Çав Іов кайран çак хамăр Вырăс патшалăхин патріархĕ пулнă). Унтан св. Герман хăй вырăнне çав Іов монаха кўртнĕ те, хăй каллах ĕлĕк пурăннă Волоколамскри монастыре кайнă; унта вăл: пĕр Турă шухăшĕ анђах тытса пурăнам, тесе кайнă. Волоколамскри монастырте вăл каллах ĕлĕк пĕрле пурăннă Гурійпа пĕр çĕре пулнă. Анђах вĕсене Турă йаланах унта пурăнма çырман; Турă вĕсене урăх, тата аслăрах, тата йывăртарах ĕç тума хушнă.

1552-мĕш çулта Хусан тутарĕсен патшалăхне Иван Васильевич патша çĕнтерсе Вырăс патшалăхĕ çумне хутăштарнă та, Хусана архіерей кирлĕ пулнă. Турă хушнипе Хусана ђи малтанхи архіерейе святой Гурійе лартнă. Хусанĕнђе хăйĕнђе те, ун таврашĕнђе те ун ђухне Христос тĕнне тытакансем вырăссем анђах пулнă, ытти халăхсем пур те суйа тĕнпе пурăннă. Çав тĕрлĕ нумай суйа тĕнлĕ халăха ђăн тĕн çинђен вĕрентсе пурăнма Хусанти архіерей аллине панă; çавăнпа Хусанти архіерей Гурійе хăй пекех Турăшăн анђах тăрăшса пурăнакан, Христос çинђен вĕрентме пултаракан çынсем, пулăшакансем кирлĕ пулнă. Çав пит ђаплă Гурій архіерейпе пĕрле Хусан таврашĕнђе ђи малтан Христос тĕнне сармашкăн Турă Германа та пўрнĕ. Святой Германа Сĕве хулинђи аслă, первоклассный тесе калакан монастыре пуçлăх архимандрита кўртнĕ; вăл Сĕве хулине 1555-мĕш çулта утă уйăхĕнђе Гурійпа пĕрле пынă. Сĕве хулине хăйне те Иван Васильевич Грозный патша 1550-мĕш çулта анђах лартнă. Вăл

хула ун ҫухне ҫав таврари пуҫ хула пулнӑ, ҫавӑнпа унта лартас монастырь те ҫаплӑ монастырь пулмалла пулнӑ. Св. Германа Сӗве хулине йанӑ ҫух, ҫав аслӑ монастыре лартма ӑна хушса йанӑ, ӑна тутарма хыснаран укҫа та парса йанӑ. Сӗве хулине пырсан, преподобный Герман монастырь лартма ҫи ҫӳлӗ вырӑн суйласа илнӗ те, ҫав сӑрт ҫине вӑл икӗ ҫиркӳ лартнӑ: пӗрне святой Николай йаҫӗпе лартнӑ, ун ҫумне апат тумалли пит аслӑ пӳлӗм тутарнӑ; тата тепӗрне—Турӑ Амӑшӗ вилнӗ кун йаҫӗпе лартнӑ та, ӑна шалтан та, тултан та темӗн тӗрлӗ лайӑх, илемлӗ тутарнӑ. Ку кайранхи ҫиркӳне 1561-мӗш ҫулта кӗл-туса тасатнӑ (святит тунӑ). Ун ҫухне монахсем пурӑнакан пӳлӗмсене (келіясене) йывӑҫран анҫах тутарнӑ (халӗ ӗнтӗ вӑл ӗлӗкхи йывӑҫ келіясен вырӑнне унта монахсене пурӑнма виҫӗ хутлӑ ҫул ҫурт лартнӑ). Монахсене монастырте йепле йӑвашшӑн пурӑнмашкӑн преподобный Германтан вӗренме пит лайӑх пулнӑ. Святой Николай ҫиркӗвин ҫан ҫакнӑ пайин ҫумӗнҫе пӗр пӗҫӗкҫеҫҫӗ пӳлӗм пулнӑ, святой Герман ҫас ҫасах ҫав пӳлӗмре, пӗҫҫен ҫӗрте, пӗр ҫывӑрмасӑр, ҫӗрӗ ҫӗрӗпе кӗл-тунӑ. Хӑй патне пыракансене вӑл пурне те Турӑ ҫинҫен вӗрентсе ырӑ йенне ҫавӑрнӑ; вӑл хӑй йалан Христос пурӑнӑҫне асӗнҫе тытса пурӑннӑ; ун таврашӗнҫи ҫынсем пуринҫен ытла йепле ҫӑлӑнасси ҫинҫен ун пурӑнӑҫне кура вӗренсе пынӑ. Сӗве хулинҫи монастырте монахсем йышлӑланнӑҫем йышлӑланса пынӑ, ҫавӑнпа вӑл таврара пурӑнакан халӑхсем ҫав монастырь урлӑ ҫӑн Турӑ йенне ҫавӑрӑннӑ,

тĕне кĕнĕ, ҫăн тĕнпе пурăнма вĕренсе пынă. Унти монахсем хăйсем те тĕрлĕ ҫĕре саланса ҫав таврари суйа тĕнлĕ халăхсене Христос ҫинҫен вĕрентсе ҫӳренĕ.

Преподобный Герман Сĕве хулинҫе 9 ҫул пурăннă, вăл унта ывăннине, каннине пĕрре те пĕлмен, йалан Турра йурăхлă ĕҫсем туса пурăннă. Вăл ҫав тĕрлĕ Турра йурăхлă пурăнни ҫинҫен пур ҫĕре те ҫап сарăлнă. Ун ҫинҫен Москвара митрополитпа патша та пĕлнĕ. Хусана ҫи малтан лартнă архіерей Гурій 1563-мĕш ҫул раштав уйăхин (декабрĕн) 4-мĕш кунĕнҫе вилнĕ; вăл вилсен пурте пĕр канаш тытса, ун вырăнне Хусанти архіепископ пулма святой Германа суйланă. Святой Герман, малта каланă пек, Хусан халăхне ҫи малтан ҫутта кăларма тăрăшнă Гурійпа пĕр кăмăллă, пĕр шухăшлă ҫын пулнă. Святой Герман пурăнăҫĕ ҫинҫен Хусантах кайран архіепископ пулса пурăннă Григорій ҫырнă; вăл ун ҫинҫен ҫапла каласа ҫырнă: святой Герман Гурій вырăнне аслă ĕҫе кĕрсен, Гурій пекех тăрăшнă, тенĕ. Тата авалхи ҫынсем ун ҫинҫен каланă: святой Герман суккăррисемшĕн куҫ вырăнне, уксаххисемшĕн ура вырăнне пулнă, такăнакансемшĕн, ӳкекенсемшĕн туйа вырăнне пулнă, хуйхăлă, хурлăхлă ҫынсенĕн ҫунĕсене пусаракан ҫын пулнă, тенĕ. Святой Герман вăл хăй ĕмĕрĕнҫе пурне те хăй ăсĕпе, хăй курса ҫухласа илнĕ, йалан хăй Турра йурăхлă пурăннă, ҫынна ырăлăх тăвасран нихăҫан та ҫарăнман. Хăй ҫапла ырă ĕҫсем туса пурăнса вăл, нимĕн курмасăр, суйа тĕнпе, Мухамет тĕнĕпе пу-

рăнакан Хусан тавращĕнҫи халăхсене ҫутатса пурăннă; вăл йалан хăйне шанса панă халăха ҫутта кăларасшăн тăрăшнă; праҫниксенҫе ҫиркӳ кĕллисене пит ҫаплă тунă; хăй умĕнҫи архіерей Гурій акса хăварнă ырăлăх пĕрҫисене вăл ҫăнахах шăварса ӳстернĕ, ҫимĕҫ кӳрекен тунă; Гурій вĕрентме пуҫланă халăха вăл Христос тĕнне тата хытăрах ĕнентерсе, тĕрĕсрех тытакан тунă.

Иван Васильевич патша Герман ҫапла пурăннине пĕлсен, пуринҫен ытла вăл йăвашшине, ăшă кăмăллине пĕлсен, ăна митрополита кӳртес тесе, Москвана ҫĕнтернĕ. Иван Васильевич патша вăл вăхăтра хайарланса ҫынсене нумайĕшне пĕр айăпсăрах хĕн кăтартса асаплантара пуҫланă. Ун ҫуххехи митрополит Филипп ăна ҫапла пурăннăшăн ҫас ҫасах пĕр хăрамасăр кала кала ӳкĕтленĕ. Патша уншăн Филиппа курайми пулнă та, ăна монастыре йанă. Вăл вара шухăшланă: Герман йăваш ҫын, ăна митрополита кӳртсен, вăл Филипп пек мана хирĕҫ пымĕ, тенĕ. Анҫах вăл шухăшланă пек пулман. Патша Германпа ҫăн малтан калаҫнă ҫухах, Герман апла ҫын маррине сиснĕ: св. Герман хăйĕн тĕрĕс сăмахне пĕртте Патшаран пытарса, ăна йурас тесе калаҫман. Ҫавăнпа Патша Германа митрополита кӳртмен, вара Герман вăл тĕлĕшпе ҫулталăк та ҫиҫĕ уйăх хурлăх курса, тертленсе пурăнмалла пулнă. Святой Филиппа сут тума пуҫласан, святой Герман пĕр хăрамасăр Святой Филипп айăпсăррине каласа тăнă, вăл ун ҫухне патшана йурасшăн Филиппа айăплакан ҫынсене те вăтантарнă. Св. Герман тем пек тĕрĕс

калаҫнӑ пулсан та, Хайар патшан ҭӗри ҫемҫелмен, Филиппа вӗлерттернӗ. Унтан кайран Герман та нумай пурӑнайман; вӑл 1568-мӗш ҫулта ҭӳк уйӑхин (ноябрӗн) 6-мӗш кунӗнҭе вилнӗ; ӑна хӑшӗ етем йывӑрлӑхепе вилнӗ теҫҫӗ, хӑшӗ Іоанн ҫиллинҭен вилнӗ теҫҫӗ. Святой Герман вилнӗ ҭухне ун патӗнҭе икӗ архимандрит пулнӑ: пӗри Сӗве хулинҭи Иродіон, тепӗри Хусанти Іеремія пулнӑ. Вӗсем ҫав хӑйсен аслӑ кӗтӳҫи пулса, хӑйсене вӗрентсе пурӑннӑ Германӑн ӳтне Хусанти св. Николай йаҭӗпе лартнӑ ҭиркӳ айне пытарнӑ; ӑна пытарнӑ ҭух вӗсем пит хуйхӑрса макӑрнӑ. Хусанта кайран архіерей пулнӑ Григорій ҫырнӑ тӑрӑх, Иван Грозный патша пит ҫиллес, хайар пулнипе, унтан пур те хӑраса анҭах тӑнӑ; ҫавӑнпа Германа пытарнӑ ҫӗре те пӗр архіерей те пыман тет.

Тӗттӗм халӑха ҫутӑлтарнӑ Герман вилессе те пит канлӗ вилнӗ. Пире Ҫӑлакан Туррӑмӑр Христос каланӑ: хӑйне кӗҫӗне хуракан кирек кам та асла тухӗ, тенӗ. Ҫавӑн пек св. Герман та вилсен асла тухнӑ. Унӑн ҭунне Турӑ Хӑй патне илнӗ, таса ӳтне ҫӗрме памасӑр ҫынсене тӗрлӗ ҭиртен сыватмалӑх хӑват панӑ. Св. Герман вилни 24 ҫул иртсен, Сӗве хулинҭи монастырти монахсем те, хулари ахаљ ҫынсем те св. Герман ӳтне Хусантан хӑйсем патне Сӗве хулине илесшӗн пулнӑ. Ѳеодор Иванович патшапа ун ҭухнехи патріарх Іов св. Германӑн ӳтне Хусантан Сӗве хулине илсе кайма ирӗк панӑ. Ҫапла св. Германӑн таса ӳтне Хусантан Сӗве хулине куҫарнӑ вара. Сӗве хулинҭен ӑна пӗтӗм хула халӑхӗпе Хусанти мит-

рополит Гермоген (1592-мӗш ҫулта авӑн уйӑхин -сентябрӗн 25-мӗш кунӗнҗе) хирӗҫ тухнӑ та, ӑна архіерейсене пытарнӑ пек кӗл-туса пытарнӑ. Унтан св. Германӑн таса ӳтне Сӗве хулинҗи монастырте Турӑ Амӑшӗ вилнӗ куна асӑнса лартнӑ җиркӗве илсе кӗрсен, җиркӳ ӑшне те, пӗтӗм монастыре те ырӑ шӑршӑ сарӑлнӑ. Св. Германӑн таса ӳҗӗ Сӗве хулинҗи ҫав монастырте Турӑ Амӑшӗ вилнӗ куна асӑнса лартнӑ тиркӳре халӗ те пӗр ҫӗрмесӗр выртаҭ. Вӑл хӑватсем тӑвакан таса ӳте Сӗве хулине куҫарсан, ун патне тӗрлӗ йенҗен, тӗрлӗ җирпе асапланакансем пыра пыра йӑлӑна пуҫланӑ; хӑйсем Турра ӗненнӗ тӑрӑх вӗсем җирӗсенҗен тасалнӑ (сывалнӑ). Св. Германӑн ҫӗрмесӗр выртакан ӳҗӗ патне пуҫҫапма пырса сывалнисенҗен пит паллисем ак ҫаксем: Ҫӗрпӳ хулинҗи священник ывӑлӗпе Шупашкар хулинҗи пӗр арӑм усал йернӗ җирӗсенҗен җӗрӗлнӗ; тата ҫав Шупашкар хулисемех пӗр суккӑр ҫуралнӑ хӗр, Сӗве хулисем пӗр суккӑр тӑлӑх арӑм куракан пулнӑ. Нумайӗшӗ св. Германӑн сӑнне хӑйсем патне илсе пырсан та җирӗсенҗен сывалнӑ. Ҫавна кура св. Германӑн сӑнне халӗ те Сӗве хули таврашӗнҗи халӑхсем тем пек хытӑ ӗненсе, таса кӑмӑлпа хӑйсем патне кӳртеҫҫӗ.

Хусанта митрополит пулса пурӑннӑ Лаврентій св. Герман тивлеҗӗпе Турӑран нумай ырӑлӑх курнине хӑй те сӑнанӑ; ҫавӑнпа вӑл, св. Герман тивӗҫлӗхне хисеплесе, ун йаҗӗпе кӗл-тумалли кӗнеке ҫырнӑ; ҫав кӗнеке ҫинех тата вӑл пӑртакҫӑ, кӗскен анҗах, ун пурӑнӑҫӗ ҫинҗен, ун кӗллипе

Ҫăлакан Туррăмăртан пулнă хăватлă ĕҫсем ҫинҫен те ҫырса хăварнă.

1696-мĕш ҫулта йупа уйăхин (октябрĕн) 6-мĕш кунĕнҫе Хусанти митрополит Маркелл, Адріан патріархран ыйтса, кĕмĕл виттерсе ҫĕнĕ тупăк тутарнă та, св. Германăн таса ўтне ҫавăн ăшне выртарнă. Хусанта митрополит Тихон ҫухне ун тупăкне алтарь умĕнҫен ҫиркў варрине куҫарса лартнă. Св. Германăн таса ўтне алтарь умĕнҫен ҫиркў варрине куҫарса лартнă куна та вилнĕ кунне уйанă пекех уйаммалла тунă; вăл утă уйăхин (іюлĕн) 23-мĕш кунĕнҫе пулать. Св. Германăн таса ўҫĕ ĕнтĕ халиҫҫенех ҫавăнта выртать. Вăл хăй патне ĕненсе пыракансене халĕ те тĕрлĕ ырăлăх кăтартать.

Хăватлă ĕҫсем тăвакан св. Герман кĕллипе пире те Турă ҫав ырăлăхсене кăтартин-ҫĕ; пуринҫен ытла, ырă кăмăллă Туррăмăр пире пўкле (иҫелсĕр) вилĕмрен, йывăрлăхпа пĕтесрен, тăшман ҫĕмĕрсе тухасран, пур тĕрлĕ усалтан та сыхласа тăрин-ҫĕ.

Христоса ĕненекен халăх св. Германа аслăласа ҫапла кĕл-тăвать:

*Ей святой Герман, есĕ ҫамрăкранах Христос панă ĕҫе кăмăлăнтан тытăннă. Тăрăшса типĕ тытса кĕл-тунипе мухтава тухнă. Ҫапла пурăннăшăн Турă сана святой Гурійпа пĕрле ҫиркў ĕҫĕсене туса пурăнма ҫĕнĕрен тĕне кўртсе ҫутăлтарнă Хусан патшалăхне ҫĕннĕ. Есĕ Сĕве хулинҫе ху лартнă монастырте малтанхи пуҫлăх пулнă, Хусана малтанхи архіерей хыҫҫăн архіерейе кĕме тивĕҫлĕ пулнă. Ўтў санăн ху лартнă монастырте канса выртать, ҫуну*

*Турă умĕнтъе тăрат. Ей пире çутăлтарикан Герман, ху пекех халăха çутăлтаракан Гурійпа пĕрле пирĕншĕн Турра кĕл·ту: есĕ лартнă монастырь малашне те таса тăтăр-тъĕ, есир Турра тĕрĕс ĕненсе пурăнма вĕрентнĕ халăх сăваплă пурăнтăр, суйа тĕн тĕттĕмĕ тъăн тĕн çуттипе çуталса пытăр.* (Тропарь 4-мĕш кĕвĕ).